24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 ЯНВАРЬ 20 ЫТЛАРИКУН 16(6041) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Кĕçĕн лейтенанта Я. М. Иванов летчика Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн кĕçĕн лейтенанта Яков Михайлович **Иванов** летчика, **ЛЕНИН орденĕпе «ЗОЛОТАЯ ЗВЕЗДА»** медалĕ парса, **Совет Союз Геройĕн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 çулти январĕн 17-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Иккĕмĕш рангри капитана И. А. Колюшкина Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн иккĕмĕш рангри капитана Иван Александрович **Колюшкина, ЛЕНИН орденĕпе «ЗОЛОТАЯ ЗВЕЗДА»** медалĕ парса, **Совет Союз Геройĕн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 çулти январĕн 17-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

И. М. Сивков краснофлотеца Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн Иван Михайлович **Сивков** краснофлотеца, **ЛЕНИН орденĕпе «ЗОЛОТАЯ ЗВЕЗДА»** медалĕ парса, **Совет Союз Геройĕн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 çулти январĕн 17-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Вооружени Халăх Комиссариачĕн 221-мĕш номерлĕ „Баррикада" заводне Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Çĕнĕ йышши хĕçпăшалсем туса кăларас тĕлĕшпе правительство заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Вооружени Халăх Комиссариачĕн **221-мĕш номерлĕ «Баррикада» заводне ЛЕНИН орденĕпе** наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 çулти январĕн 18-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Вооружени Халăх Комиссариачĕн 74-мĕш номерлĕ заводне Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Çĕнĕ йышши хĕçпăшалсем туса кăларас тĕлĕшпе правительство заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Вооружени Халăх Комиссариачĕн **74-мĕш номерлĕ заводне ЛЕНИН орденĕпе** наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 çулти январĕн 18-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Вооружени Халăх Комиссариачĕн 2-мĕш номерлĕ заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Çĕнĕ йышши хĕçпăшалсем туса кăларас тĕлĕшпе правительство заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Вооружени Халăх Комиссариачĕн **2-мĕш номерлĕ заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 çулти январĕн 18-мĕш.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Хĕрлĕ Çарăн высший начальство составне çар званийĕсем парасси çинчен

Хĕрлĕ Çарăн высший начальство составĕнчи ялта асăннă çынсене СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званийĕсене парас:

ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Александр Николаевич **Беголюбова.**
Василий Константинович **Мороза.**
Михаил Александрович **Шалина.**
Иван Михайлович **Чистякова.**

ИНЖЕНЕРНАЙ ВОЙСКĂСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Николай Семенович **Горбачова.**

ТЕХНИКАЛЛА ВОЙСКĂСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Алексей Васильевич **Добрякова.**
Петр Ильич **Румянцева.**

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.
СССР Совнаркомĕн ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль, 1942 çулти январĕн 17-мĕш.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса тата уйрăм участоксенче унăн контратакисене сире-сире пăрахса, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутра **Шаховская-па Лотошинăна** (Мускав облаçĕнчи район центрĕсем), йышăнса илнĕ.

Январĕн 16-мĕшĕнче нимĕçсенне 29 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

Январĕн 17-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсенне 7 самолет персе антарнă.

* * *

Январĕн 16-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсенне 19 танк, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 340 автомашинăна, боеприпассем тиенĕ 80 лава, 5 орудие прислугипе пĕрлех, зенитнăй пулеметсен 4 точкине, горючи тултарнă 4 автоцистернăна пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи пĕр эшелона аркатса тăкнă, 2 эшелона вут тивертнĕ, чугунçул çинчи 23 вагона çĕмĕрнĕ, боеприпассемпе горючи складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугунçул кĕперне ишĕлтернĕ, противник пехотин 7 батальонне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

А. ялĕнче (Хĕвеланăç фрончĕ) Прокофьев юлташăн чаçĕнчи боецсем январĕн 16-мĕшĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 107 çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Кузнецов юлташăн боецĕсем (Хĕвеланăç фрончĕ), противника хирĕç наступлениллĕ çапăçусем туса пырса тата минăсем хурса тухнă вырăнсене çĕнтерсе пырса, пĕр кун хушшинчи çапăçусенче, туллимар даннăйсем тăрăх, тăшманăнне 4 танк, 84 грузовой автомашинăпа çăмăл автомашина, пĕр броневик, 27 пулемет, 4 миномет т. ыт. нумай тĕрлĕ хĕçпăшалсем тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Власов юлташăн чаçĕсем тăшманăнне икĕ танк çĕмĕрнĕ, 17 оруди, 39 автомашина, 27 пулемет, боеприпассем турттарса пыракан 19 лав тата ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнĕ салтаксем те пур.

* * *

Сержант Нечаев, нимĕçсем тытса илнĕ Ревякино ялне çĕмĕрсе кĕрсе, гранатăна тӳрĕ тĕллесе ывăтса, тăшманăн 9 салтакне тата пĕр офицерне вĕлернĕ.

* * *

Аристов ялĕшĕн пынă çапăçура красноармеец-пулеметчик Корягин, пулеметран персе тăрса, тăшманăн виçĕ атакине сире-сире пăрахнă тата тăшманăн 80 салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пĕр çапăçура танк командирĕ Ловцов юлташ тăшманăн 7 танкне тата 3 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ĕç условийĕсем каторгăри пек йывăр пулнипе тата выçлăх пирки, Германири предприятисенчи ĕç тухăçлăхĕ чакнăçемĕн чакса пырать. Бохумри машиностроительнăй заводра вăтам квалификациллĕ рабочин январь уйăхĕнчи ĕç тухăçлăхĕ, иртнĕ çулти январь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 29 процент чакнă. Çулталăк хушшинче çав заводра 1.263 хутчен тĕрлĕрен инкек-синкексем пулнă, вĕсенчен 161-шĕ çынсем вилнисем пулнă. Инкек-синкексем уйрăмăнах ютçĕршыв рабочийĕсем хушшинче час-часах пулаççĕ, ютçĕршыв рабочийĕсем заводра чылаях йышлăн шутланса тăраççĕ.

* * *

Баку хулинчи Н-ски заводри коллектив кĕске вăхăт хушшинче çĕнĕ продукци туса кăларас ĕçе вĕренмелли ответлă задани илнĕ. Çав продукцие туса кăларма строгальнăй, сверлильнăй станоксемпе хĕçпăшаллантарнă специальнăй цех кирлĕ пулнă. Слесарь Каусов, предприяти директорĕ Зейналов тата инженер Марданов юлташсемпе пĕрле, юрăхсăра тухнă станоксене кирлĕ таранах пуçтарнă. Каусовпа Копейкин юлташсен бригадисенчи слесарьсем икшер те виçшер кун килĕсене каймасăр ĕçленĕ. Вĕсем каçхине те, кăнтăрла та кăнтăрла ывăнма пĕлмесĕр станоксене юсанă. Часах мĕнпур станоксене юсаса çитернĕ те тепĕр 15 кун иртсен, детальсен малтанхи ушкăнне туса кăларнă. Халĕ çĕнĕ цех пĕтĕм хăвачĕпе ĕçлеме тытăннă.

Январĕн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Рокоссовский юлташăн боецĕсем хĕссе пынипе каялла чакакан противник (Хĕвеланăç фрончĕ) çапăçу хирне 143 автомашина тата çунтарса янă 17 танк пăрахса хăварнă. Тепĕр участокра Говоров юлташăн чаçĕсем нимĕçсенне 5 танк, 31 автомашина, 13 трактор, 300 ытла винтовка тата 236.000 патрон тытса илнĕ. Çапăçу хирне противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 1000 çын ытла вилсе юлнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, халăх пурăнакан темиçе пунктран противника хĕссе кăларса, анта пысăк сиен кӳнĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 900 виллине çити пăрахса хăварнă. Пирĕн боецсем противникăннĕ 4 йывăр оруди, танксене хирĕç пемелли 10 оруди, 14 миномет, 6 пулемет, 3 автомобиль, боеприпассен складĕпе япаласен складне тытса илнĕ.

* * *

Халăх пурăнакан Л. пунктшăн пынă çапăçусенче Миронов лейтенантăн танк экипажĕ нимĕçсенне 4 танк, танксене хирĕç пемелли 6 оруди, икĕ броневик пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 30 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Мелитополь партизанĕсен П. тата Г. юлташсем командир пулса тăракан икĕ отрячĕ нимĕçсен танксемпе автомашинăсем тата снарядсем турттарса пыракан эшелонне крушени тунă. Çакăн хыççăн нумай танксемпе автомашинăсем стройран тухнă. Снарядсем тиенĕ 5 вагон сывлăша сирпĕнсе сĕкленнĕ. Партизансен çав отрячĕсем противникăнне 6 автомашина, грузсем тиенĕ 27 лава пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 76 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсен командованийĕ ялсенчен пĕрине ялти актива арестлеме карательнăй отряд янă. Партизансем гитлеровецсен карательнăй отрядне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн войскăсем вăйлăн пырса çапнипе каялла чакакан нимĕçсен фашистла войскисем хĕçпăшалсемпе боеприпассене пăрахса хăвараççĕ. Çакăн пирки нимĕçсен командованийĕ 1198-А номерлĕ инструкци кăларнă. Унта çапла каланă: «Пăрахса хăваракан хĕçпăшалсемпе снаряженисене хĕçпăшалсене пуçтарса хумалли пункта илсе çитермелле. Уйрăмăнах вилнисемпе аманнисен пистолет-пулемечĕсене пуçтарса пымалла, мĕншĕн тесен çавăн йышши хĕçпăшалсем питех те нумай çухалса юлаççĕ».

Çапла вара, нимĕçсен хĕçпăшалсем питех те нумай пĕтнине Гитлерла командованин хăйĕнех ирĕксĕр йышăнма лекет.

* * *

Нимĕçсен вилнĕ салтакĕ Лоренс Лен çумĕнче вăл хăйĕн арăмĕ Фрида тата хĕрĕ патне çырнă çырăва тупнă. Акă мĕн çырнă Лен: «Вунă кун хушши эпĕ пĕр сăмах та çыраймарăм. Эпир пĕрмаях вăрмансенче пултăмăр. Унта эпир иртен пуçласа сĕм çĕрле пуличченех блиндажсем тăватпăр. Укреплениссем туса çитерме ĕлкĕретпĕр çеç, пирĕн часть каялла чакмалли приказ илет те, пирĕн ĕç харама каять».

* * *

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем хĕснипе каялла чакакан нимĕç бандичĕсем Никиткипе Маслово ялĕсенчи çынсене пурне те хăйсемпе пĕрле хăваласа кайнă. Çав ялсенчи нумай çуртсене гитлеровецсем вут тĕртсе çунтарса янă. Никитки ялĕнче 70 çуртран 69 çурт çунса кайнă, Маслово ялĕнче 69 çуртран 68 çурт çуннă. Маслово ялĕнче нимĕçсем Ф. А. Морозовпа унăн хĕрне Марийăна, Г. Котова, В. Кузнецова, В. Петровская колхозницăсене чĕрĕллех çунтарса янă.

Январĕн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 18-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противникăн хирĕç тăмалли вырăнĕсене çĕнтерсе илсе, малалла куçса пынă. Пирĕн войскăсем халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутрах **Полотняный завода,** йышăнса илнĕ.

Январĕн 17-мĕшĕнче нимĕçсенне 17 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 3 самолет пĕтнĕ.

Январĕн 18-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 3 самолетне персе антарнă.

* * *

Январĕн 17-мĕшĕнче пирĕн авиация чаçĕсем нимĕçсенне 6 танк, войскăсем тата грузсем турттарса пыракан 290 яхăн автомашина, 13 бронемашина, боеприпассем тиенĕ 255 лава, 7 орудие вĕсен прислугиçемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă, чылай вырăнта чугунçул линине сиенленĕ, 7 вагона тата 2 паровоза сирпĕнтерсе янă, чугунçул кĕперне пăснă, противник пехотин 2 полкне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Беззерхов юлташăн гвардейски чаçĕ (Хĕвеланăç фрончĕ), противника хирĕç хаяррăн çапăçса, нимĕçсене пысăк сиен кӳнĕ. Гитлерăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн боецсем нимĕçсенне 3 танк, 27 оруди, 30 пулемет, 1 зенитнăй установка тата ытти нумай снарядсем тытса илнĕ. Тытса илнĕ орудисене гвардеецсем огневой позицие илсе тухса вырнаçтарса лартнă та тăшмана хăйсен снарядĕсемпех аркатса пыраççĕ.

* * *

Полбин юлташăн авиачаçĕ, Калинин фронтĕнче кĕрешекенскер, тăшманăн аэродромĕ çине кĕтмен çĕртен вĕçсе пырса тапăннă. Бомбăсем тĕл пăрахса тата пулеметсенчен персе нимĕçсен 16 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пулеметпа аэродрома сыхласа тăракан красноармеец Степаненко противникăн «Ю-88» самолечĕ пĕлĕтсем хушшинчен тухнине асăрханă та пулеметран пеме пуçланă. Фашистсен машини сывлăшрах сирпĕнсе кайнă.

* * *

Крымра кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕсен ĕçĕсем çинчен хыпарсем илнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, çак отрядсем 2 уйăх хушшинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1.800 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 41 гитлеровеца тыткăна илнĕ, 10 пулемет тытса илнĕ, боеприпассем тиенĕ 70 грузовой машинăна тата 58 лава, горючи тултарнă 3 цистернăна пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне партизансем минăсем лартнă çулсем çинче противникăн пехотăпа боеприпассем турттарса пыракан 100 ытла автомашини сирпĕнсе кайнă. Пирĕн войскăсем Крымра çĕнтерӳ тунипе хавхаланнă партизансем хăйсен боевой ĕçĕсене татах та ытларах вăйлатнă.

* * *

Нимĕçсен 215-мĕш артполкĕнчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Фриц Маркоталлер допросра çапла каласа панă: «Эпĕ сывмар, эпĕ туберкулезпа чирлетĕп, хырăмпа пыршăсен хронически катаррĕпе чирлетĕп. Çарта пулнă вăхăтра эпĕ вар хырăм тифĕпе чирлесе ирттертĕм. Нумаях та пулмасть манăн урана тăм илчĕ, шăнса пăсăлтăм. Россинăра 3 эрне хушши пулнă вăхăтра 10 кун лазаретра выртрăм, анчах çапах та мана çартан кăларса ямарĕç. Лазаретра эпĕ нумай салтаксем çумĕнче совет листовкисене куртăм. Салтаксем вĕсене типтерлĕ сыхласа усраççĕ, вĕсен содержанине вăрттăн сӳтсе яваççĕ».

* * *

Мускав облаçĕн Угодски завод районĕнчи Черная Грязь ялĕнче гитлерла мерзавецсем 30 хресчене персе пăрахнă та вĕсен виллисене çул тăрăх йывăçсем çине çакса тухнă. 3 эрне хушши, яла Хĕрлĕ Çар чаçĕсем йышăнса иличчене, нимĕçсем персе пăрахнисене пытарма ирĕк паман. Çав ялтах фашистла бандитсем икĕ хĕрарăма — Е. Солонинковăпа К. Ерохинăна ирĕксĕрлесе пусмăрланă та, унтан тискер кайăкла вĕлернĕ.

* * *

Франци патриочĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешеççĕ. Гитлер çарĕн заказĕсене тăвакан Гочкис заводĕнче нумаях пулмасть тĕрĕс механикăн 42 станокне пăснă пулнă. Иртнĕ кунсенче çеç Абвильре нимĕçсен икĕ çар поездне ӳпĕнтерсе янă.

Январĕн 19-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Иртнĕ эрнере, январĕн 10-мĕшне 16-мĕш хушшинче, нимĕçсен авиацийĕн 129 самолечĕ пĕтнĕ. Вăл шутра сывлăшри çапăçусенче 74 самолет персе антарнă, зенитнăй орудисемпе тата пулеметсемпе 13 машинăна персе ӳкернĕ, противникăн аэродромĕсенче 42 самолет пĕтерсе тăкнă. Çак вăхăт хушшинчех пирĕн 39 самолет пĕтнĕ.

* * *

Берестов юлташăн мотострелковăй чаçĕ, Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, противника хирĕç темиçе кун хушши хаяррăн çапăçса, халăх пурăнакан 13 пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшман хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 500 виллине пăрахса хăварнă. Пирĕн боецсем нимĕçсенне 14 танк, 14 тягачпа трактор, 6 автомашина, штабăн 1 автобусне, 6 оруди тата питĕ нумай боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Старший лейтенант Астафуровăн саперĕсем, пирĕн чаçсене малалла куçса пыма пулăшса, питĕ ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Пилĕк кун хушшинче вĕсем танксене пĕтермелли 204 мина, пехотăна пĕтермелли 59 мина шыраса тупса сиенсĕрлетнĕ. Противник персе тăнă вăхăтрах вĕсем пĕр километр тăршшĕ шоссе çулне минăсенчен тасатнă.

* * *

Калинин фронтĕнче кĕрешекен Трифоновпа Петров юлташсен чаçĕсенчи летчиксем юлашки тăватă кун хушшинче противникăн боеприпассемпе пехота турттарса пыракан 104 автомашинине, 2 танкне, грузсем тиенĕ 70 яхăн лавне, продовольстви тата боеприпассем тиенĕ чугунçул çинчи 22 вагонне, горючи тиенĕ 5 цистернине пĕтерсе тăкнă.

* * *

А. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Калинин облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, нимĕçсен çар снаряженийĕ турттарса пыракан автоколонни çине тапăннă. Колоннăна партизансем пĕр вăхăтрах темиçе енчен атакăланă. Партизансем, гранатăсем тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем пăрахса, нимĕçсен 60 автомобильне яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 215-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 380-мĕш полкăн 7-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Кристиан Липпов çапла каласа панă: «Юлашки вăхăтчченех пирĕн дивизи Францире тăчĕ. Дивизие фронта, Российăна, куçарни салтаксен кăмăлне питĕ кӳрентерчĕ. Пирĕн полкран салтаксен пĕр ушкăнĕ тарса, Францин оккупацилемен зонине каçса кайнă. Дивизи Российăна çитсен малтанхи кунсем хушшинчех пирĕн чаçри салтаксенчен нумайăшне тăм илсе янă. Манăнне тата старший стрелок Герман Гецелĕн урине тăм илчĕ.

Иозеф Майерпа Людвиг Реш ефрейторсен аллисене тăм илсе янă. Салтаксен шухăш-кăмăлĕсем питĕ япăх, çĕнтерĕве текех никам та ĕненмест».

* * *

Мускав облаçĕнчи Каменки ялĕнчи çынсем çапла каласа параççĕ: «Яла тытса илсен, нимĕçсем П. Голубева çуртĕнче лазарет уçрĕç. Пирĕн чаçсем пырса çапнине пула Каменкирен тухса кайнă чухне нимĕçсем Голубева çуртĕнчи хăйсен аманнă 6 салтакне çунтарса янă. Сиччĕмĕш нимĕçĕн упаленсе урама тухма май килнĕ. Ирхине унăн шăнса хытнă виллине юр ăшĕнче тупнă».

* * *

Германи çарĕ валли ăшă япаласем паманшăн Дармштадт хулинчи (Германия) 115 çынна продовольстви карточки памалла мар тунă. Çапла ĕнтĕ çав çынсен выçăпа асапланса вилме тивет. Çав сăлтава пулах хулари 17 çынна концентрациллĕ лагере хупса лартнă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Вооружени Халăх Комиссариачĕн Фрунзе ячĕпе тăракан 7-мĕш номерлĕ заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Çĕнĕ йышши хĕçпăшалсем туса кăларас тĕлĕшпе правительство заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Вооружени Халăх Комиссариачĕн **Фрунзе ячĕпе тăракан 7-мĕш номерлĕ заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 çулти январĕн 18-мĕш.

Тинĕс-Çар вăйĕсен начальствующи составне орденсемпе наградăлани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн 1942 çулти январĕн 17-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх орденсемпе наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе — генерал-майора **Л. С. Березенкина,** иккĕмĕш рангри капитана **С. Д. Солоутина;**

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — 26 çынна;

ХĔРЛĔ ÇАЛТĂР орденĕпе — 3 çынна наградăланă (ТАСС).

СССР ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔН ХАЛĂХ КОМИССАРИАТĔНЧЕ

Тинĕс-Çар Флотĕнчи Сывлăш-Çар Вăйĕсен 1-мĕш минно-торпеднăй полкĕнчен, Хĕрлĕ ялавлă 72-мĕш хутăш полкĕнчен, авиацин 5-мĕш тата 13-мĕш истребительнăй полкĕсенчен Гвардейски полксем тăвасси çинчен

Тăван Совет Çĕршывĕшĕн нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан сывлăшри нумай çапăçусенче Тинĕс-Çар Флотĕнчи Сывлăш-Çар Вăйĕсен çак полкĕсем: 1-мĕш минно-торпеднăй полк, Хĕрлĕ ялавлă 72-мĕш хутăш полк, 5-мĕш тата 13-мĕш истребительнăй полксем уйрăмăнах палăрчĕç.

Авиацин 1-мĕш минно-торпеднăй полкĕ вăрçăн тăватă уйăх çурри хушшинче противникăнне сывлăшри çапăçусенче 37 самолет тата çĕр çинче 12 самолет пĕтерсе тăкнă, противникăн пысăк центрĕсем çине 93 хутчен вĕçсе хайса тапăннă, çав тапăнусенче тăшманăн объекчĕсем çине 13 пин бомба пăрахнă, тăшманăн шывĕсенче 113 мина лартнă, противникăнне 18 транспорт путарнă, 133 танк, 93 автомашина тата 11 оруди пĕтерсе тăкнă.

Авиацин Хĕрлĕ ялавлă 72-мĕш хутăш полкĕ вăрçăн тăватă уйăх çурри хушшинче противникăнне сывлăшри çапăçусенче 118 самолет тата аэродромсем çинче 24 самолет пĕтерсе тăкнă, вĕçсе пырса штурмласа тăшман пехотинчен 2.000 ытла çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 3 транспорт путарнă, çыранри 3 батарейăна пĕтерсе тăкнă, противникăн порчĕсенче нумай хутчен причалсемпе сооруженисене çĕмĕрсе аркатнă.

Авиацин 5-мĕш истребительнăй полкĕ вăрçăн пилĕк уйăхĕ хушшинче 5.899 боевой вĕçев тунă, сывлăшра 389 çапăçу туса ирттернĕ, противникăн войскисемпе аэродромĕсене 62 хутчен штурмланă, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна çити, 105 самолетне тата 55 танкне пĕтерсе тăкнă.

Авиацин 13-мĕш истребительнăй полкĕ вăрçăн ултă уйăхĕ хушшинче 5.945 вĕçев тунă, тăшманăн войскисемпе транспорчĕсене штурмланă, сывлăшри çапăçусенче противникăнне 117 самолет пĕтерсе тăкнă, 12 танк, 387 автомашина, 20 катер, 3 зенитнăй батарейăна пĕтерсе тăкнă.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă сывлăшри çапăçусенче хастарлă пулнăшăн, çирĕплĕхпе паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплиналлă та организованно пулнăшăн, çав полксен личнăй составĕ геройлăх кăтартнăшăн çулте асăннă полксенчен Гвардейски полксем тунă. Уйрăмăн илсен:

1) Авиацин 1-мĕш минно-торпеднăй полкĕнчен—Авиацин 1-мĕш Гвардейски минно-торпеднăй полкĕ—полк командирĕ Совет Союзĕн Геройĕ полковник **Е. Н. Преображенский.**

2) Авиацин 72-мĕш хутăш полкĕнчен—Авиацин 2-мĕш Гвардейски хутăш полкĕ—полк командирĕ капитан **И. К. Туманов.**

3) Авиацин 5-мĕш истребительнăй полкĕнчен—Авиацин 3-мĕш Гвардейски истребительнăй полкĕ — полк командирĕ Совет Союзĕн Геройĕ майор **П. В. Кондратьев.**

4) Авиацин 13-мĕш истребительнăй полкĕнчен—Авиацин 4-мĕш Гвардейски истребительнăй полкĕ—полк командирĕ майор **Б. И. Михайлов.**

Асăннă полксене Гварди ялавĕсем парассĕ.

Хĕвеланăç фрончĕн Командованийĕпе Политуправленийĕ Мускав комсомолĕпе Мускаври мĕнпур çамрăксем патне янă саламлă çыру

Мухтавлă столицăри — Мускав хулинчи комсомолецсемпе комсомолкăсем, каччăсемпе хĕрсем! Сире, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса производствăра çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илес чаплă ĕçе пуçарса яракансене, Хĕвеланăç фрончĕн Военнăй Совечĕпе Политуправленийĕ пурсăра та хĕрӳллĕн саламлать. Эсир пуçарнипе çĕкленнĕ çак патриотизмлă движени пĕтĕм халăх хушшине сарăлассине тата çак майпа фронт валли государство планĕпе палăртнинчен ирттерсе çĕнĕрен нумай çĕршер самолетсем, танксем, тупăсем, минометсем, автоматсем, танксене хирĕç пемелли пăшалсем туса парассине шанатпăр. Татах та ытларах ытти тĕрлĕ боеприпассем, çар хатĕрĕсем, пиншер тонна продовольстви туса парассине ĕненетпĕр.

Эсир тылра хăвăрăн вăйсене шеллемесĕр ĕçлени, фронтшăн пĕтĕм чунтан тăрăшни Хĕрлĕ Çара татах та вăйлатать, боецсене, командирсене, политработниксене çĕнĕрен çĕнĕ чаплă çĕнтерӳсем тума хаваслантарать, нимĕç захватчикĕсене тĕппипех çапса аркатма тата гитлерла пусмăрăн хĕнхурĕнче асапланакан халăхсене пурне те ирĕке кăларма пулăшать.

Мускав çамрăкĕсем! Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пуçланă социализмлă ăмăртăва анлăнрах сарса пырăр! Ĕç тухăçлăхне ӳлерех хăпартăр! Пуçласа янă ĕçре хăвăр малта пырса, хăвăр хыççăн ыттисене ертсе кайăр! Ăнăçлă çитĕнӳсем тума ырă сунатпăр!

Хĕвеланăç фрончĕн командующийĕ, Совет Союзĕн Геройĕ армии генералĕ ЖУКОВ.

Хĕвеланăç фрончĕн Военнăй Совет членĕсем: БУЛГАНИН, ХОХЛОВ.

Хĕвеланăç фрончĕн Политуправлени начальникĕ бригаднăй комиссар МАКАРОВ.

Чукча халăхĕ фронта активлăн пулăшать

УГОЛЬНАЙ БУХТА, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Угольнăй бухтăри шахтерсем патне хăнана инçетри тундрăран Гековски ялсовет председателĕ Пеневьи чукчапа ялсовет секретарĕ комсомолец Леня Аратский пынă. Пеневьи шахтерсене тундрăра патриотла пысăк çĕкленӳ пурри çинчен каласа кăтартнă. Пăлан усракан чукчасемпе пулă тытакан чукчасем фронта активлăн пулăшаççĕ. Пăлан усракан чукчасен ярангисенче, сунарçăсен землянкисенче пур çĕрте те хастарлă ĕç пырать. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли хĕллехи тумтир, урана тăхăнмаллисем çĕлеççĕ. Пăлансен çăмлă, çемçе тирĕсенчен красноармеецсем валли чукчасем ăшă, çăмăл курткăсем хатĕрлеççĕ.

Фронтри хроника

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Пирĕн чаçсем наступлени туса пынă. Нимĕçсем урса кайсах хирĕç тăрса çапăçнă. Лейтенант Барабанщиков юлташăн подразделенийĕ наступлени туса пыракан участокра тăшман контратака туса пăхнă. Барабанщиков юлташăн боецĕсем çĕр çине выртнă та нимĕçсене хăйсен çывăхне ярса, тăшмана хирĕç вăйлăн пеме тытăннă. Тăшман вут-хĕм пырса çапнине тӳсеймесĕр каялла чакнă, çапăçу хирне 60 салтак тата икĕ офицер виллисене пăрахса хăварнă. Çак çапăçура уйрăмăнах Закусиловпа Усов боецсем пысăк паттăрлăх кăтартнă. Закусилов юлташ хăйĕн пулемечĕпе противникăн оруди расчетне пĕтерсе тăкнă. Усов юлташ фашистла офицера персе вĕлернĕ.

* * *

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Пирĕн войскăсем тăракан вырăна нимĕçсен «Ю—88» йышши бомбардировщикĕсен групни вĕçсе пынă. Самолетсенчен пĕри пирĕннисем çине пеме аялалла вĕçсе аннă. Кĕçĕн политрук Бахтин çавăнтах винтовка ярса илнĕ. Винтовкăна вăл бронĕне çĕмĕрекен пульăсен обоймипе авăрланă та тăшман самолечĕ çинелле тӳрĕ тĕллесе персе янă. Фашистсен машинине вут хыпса илнĕ, вăл татах аялалла анса пынă. Тăшман летчикĕ бомбăсем пăрахнă, анчах бомбăсем хăйсен чаçĕсем тăнă вырăна ӳкнĕ. Самолет çĕр çине татăлса ӳкме пуçланă, унтан çурăлса арканнă.

* * *

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Фашистсен танкĕ пирĕн позицисем çинелле килме тухнă. Танксене хирĕç пемелли орудисен взвод командирĕ лейтенант Пешков танк çине тĕллесе пенĕ те ăна пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем иккĕмĕш танк янă, анчах ăна та Пешковăн тӳрĕ тивекен снарячĕсем пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем виççĕмĕш танк янă, анчах унăн та çавнашкал шăпи тулнă. А. ялĕ патĕнчи икĕ кунхи çапăçура лейтенант Пешков тӳрĕ тĕллесе персе фашистсен 6 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

КАРЕЛИ ФРОНЧĔ, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Гайченко командирăн пилĕк истребительне противникăн тăхăр самолечĕ атакăланă. Вĕсенчен виççĕшĕ тӳрех малта пыракан старший лейтенант Семеновăн машинине тапăннă. Паттăр летчик хăраса ӳкмен. Питĕ ăста çаврăнса, вăл тăшман патне çывхарнă та, пулеметран тĕл персе, противникăн летчикне пĕтерсе тăкнă. Хура свастикăллă машина, управление çухатнăскер, чул пекех çĕрелле вăркăннă. Çапăçу вăхăтĕнче Семенов асăрхаман та, унăн самолечĕ хыçне тăшманăн икĕ самолечĕ вĕçсе пынă. Шултра калибрлă пĕр пуля бензин бакне шăтарнă. Ăста маневрсем туса, Семенов тăшман персе тăракан зонăран тухнă. Çак вăхăтра командира пулăшма летчик Баулин вĕçсе пынă. Хаяррăн çапăçнă хыççăн вăл Семенов çине тапăнакан самолетсенчен пĕрне персе ӳкернĕ. Тăшманăн ытти самолечĕсем тарса, сапаланса пĕтнĕ.

Совет профсоюзĕсен делегацине хисеплесе Лондонра йышăну тунă

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Ютçĕршывсемпе культурăллă çыхăну тытас тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри обществăн (ВОКС) Англи секцийĕ совет профсоюзĕсен делегацине хисеплесе йышăну тунă. Йышăнура Англири культурăллă пурнăçăн паллă представителĕсем, вăл шутрах профессор Холдейн, Англири паллă математик профессор Леви, англичансен ученăйĕ Гаммерс Митчел тата ыттисем те пулнă. Йышăнура совет посолĕ Майский юлташ тата ВОКС-ăн Англи секцийĕн президенчĕ англичансен паллă юристĕ Д. Н. Притт саламлă сăмахсем тухса каланă.

Хăйĕн сăмахĕнче Притт совет профсоюзĕсен делегацийĕн представителĕсене саламланă тата Англипе Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи культурăллă çыхăнăвăн питĕ пысăк пĕлтерĕшне кăтартса панă. Совет профсоюзĕн делегацийĕн руководителĕ Шверник юлташ хăйĕн ответлă сăмахĕнче, делегацие чыслăн йышăнни вăл англичансем аслă совет çĕршывне сума сунине кăтартать, тесе каланă. Шверник юлташ çапла палăртса хăварнă: совет халăхĕ çичĕ уйăх хушши ĕнтĕ гитлеризма хирĕç, мирлĕ саманана юратакан мĕнпур халăхсен культурин, ирĕклĕхĕн тата телейĕн çав чи хаяр тăшманне хирĕç çапăçать. Çак кĕрешӳ ĕнтĕ Совет Союзĕнчи халăхсене çеç мар, пĕтĕм тĕнчери халăхсене те гитлеризм хăрушлăхĕнчен хăтарĕ,—тенĕ.

Г-н Стаффорд Криппс Британин ССР Союзĕнчи посолĕ вырăнĕнчен тухни тата çак вырăна г-н Арчибальд Кера лартни

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Лондонра официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Британин Китайри посолĕ г-н Арчибальд Кер г-н Стаффорд Криппс вырăнне Британин ССР Союзĕнчи посолĕ пулать. Г-н Криппса хăй ыйтнипе хăтарнă. Рейтер агентстви çакна паллă тăвать: Британи правительстви г-н Криппс ССР Союзĕнче тунă ĕçсене пурне те ырлать.

ХĔРЛĔ ÇАРĂН ÇĔНТЕРĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН ЮТÇĔРШЫВ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, январĕн 18-мĕш. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçатăн çар ĕçĕсен обозревателĕ çапла çырать: нимĕçсен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи хĕллехи лару-тăрăвĕ тӳсме çук йывăрланса çитрĕ. Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсене — хальхи вăрçă ĕçĕнче тунă тĕлĕнмелле хăват теме пулать. Çав çĕнтерӳсем вĕсем Сталин хĕллехи вăхăтра чăн-чăн наступлени тума пĕлнинчен, вăл ятарласах хĕллехи кампани валли вĕрентсе хатĕрленĕ войскăсемпе лайăх усă курнинчен, тăшман тылĕнчи партизанла вăрçа вăйлатнинчен тата вăрçă ĕçĕсене лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ совет кавалерине хутшăнтарма пĕлнинчен килнĕ çĕнтерӳсем пулаççĕ. Çакăн пекех вырăссене çĕнтерӳсем тума войскăсене кирлĕ хатĕрсем парса тăни тата вĕсен коммуникаци çулĕсене лайăх организацилени те нумай пулăшрĕ. Вырăссем татти-сыпписĕр çапăçса, малалла хăвăрт пыраççĕ. Нимĕçсем çавтери пысăк çухатусем тӳсеççĕ, çав çухатусем Германин вăрçă машинине пĕтерессипатне илсе çитерме те пултараççĕ.

ТЕГЕРАН, январĕн 18-мĕш. (ТАСС). «Нехре Иран» хаçат Германин Хĕрлĕ Çара пĕтермелли планĕ путланса ларни çинчен пысăк статья пичетлесе кăларнă. «Хĕрлĕ Çар, — тесе çырать хаçат,—пĕр уйăх çурă ĕнтĕ, Балти тинĕсĕнчен пуçласа Хура тинĕсе çитиччен, пĕтĕм фронт талкишĕпех çĕнтерӳллĕ наступлени туса пырать. Нимĕçсем питех те пысăк çухатусем тӳссе каялла чакаççĕ, совет войскисем хĕссе пынине вĕсем нимĕнпе те чарма пултараймаççĕ».

Çав хаçатах, нимĕçсем темиçе уйăх каярах çеç пĕтĕм тĕнчене илтĕнмелле — хĕл пирĕншĕн нимĕне те пĕлтермест, тенине астутарса, ' халĕ ĕнтĕ мĕншĕн капла хĕллехи йывăрлăхсем çинчен кăшкăрашса нăйкăшаççĕ-ха вĕсем? — тесе ыйтать. Нимĕçсем, вырăс çарне хĕллехи сивĕсем çитиччен çапса аркатса, вырăссен пысăк хулисенче ăшă хваттерсем тупма ĕмĕтленетчĕç. Анчах та халĕ вĕсен ăшă хваттер кăна мар, ăшă тумтирĕсем те çук. Ăшă тумтире вĕсем халăхран туртса илсе, фронта ăсатаççĕ. Çапах та ку ĕçе вĕсем хая юлса тăваççĕ.

Фельдмаршал Рейхенау вилни

Ăна 6-мĕш арми поражени тӳснĕшĕн таварас майпа вĕлерни çинчен хыпарсем çӳреççĕ

ЖЕНЕВА, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Германи информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, генерал-фельдмаршал фон Рейхенау, искусство памятникĕсене тата мирлĕ совет халăхне пĕтерсе тăкасси çинчен кăларнă тискер кайăкла приказăн авторĕ, йывăр чирлесе вилнĕ.

СТОКГОЛЬМ, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Берлинран официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: «генерал-фельдмаршал Рейхенау, чĕрине тытамак тытнă пирки чирлесе ӳкнĕскер, хăйне фронтран тыла илсе тухнă чухне вилнĕ». Рейхенауна хăçан пытармалли куна палăртса хунă. Ăна пытарнă çĕрте пулма Гитлер хăй вырăнне генерал фон Рунштедтпа Геринга ярать, теççĕ.

Стокгольмри пысăк вырăнти ĕçлĕ çынсене, Германи çарĕн верховнăй командованийĕнче хальхи вăхăтра кризис ӳссе пынине лайăххах пĕлсе тăракансене, Рейхенау вилĕмĕ нимĕн чухлĕ те тĕлĕнтермест. «Рейхенау сасартăк чирлесе вилсе кайрĕ» тенине кунта Гитлер хăй вырăнтан кăларнă генерал Браухич, ĕлĕк главнокомандующи пулнăскер, кĕтмен çĕртенех чĕре чирĕпе чирлесе ӳкнĕ, тесе пĕлтерекен суя хыпара ĕненнĕ чухлĕ çеç ĕненеççĕ.

«Рейхенауна çитес кунсенчех мĕн те пулин пуласси çинчен» Стокгольмра малтанах темиçе эрне хушши тĕрлĕ хыпарсем çӳренĕ. Германин Рейхенау аллинчи 6-мĕш армине Хĕвелтухăç фрончĕн кăнтăр участокĕнче Хĕрлĕ Çар хаяррăн аркатса тăкни тата çав армин çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çухатусем питех те нумай пулни Гитлера тата ăна çывăх генералсене уйрăмăнах уртарса янă.

Рейхенауна вырăнтан кăларасси — малтанах палăртса хунă ĕç вырăнне шутланнă. Çапах та генерал Браухича вырăнтан кăларнă хыççăн, çар çыннисем хушшинче татти-сыпписĕрех çĕнĕрен вырăна лартса е вырăнтан кăларса аппаланнисем нимĕç салтакĕсен, уйрăмăнах офицерсен шухăш-кăмăлĕсене шиклентерсе ӳкернине шута илсе, ытти генералсен ячĕсене упраса хăварас тесе Рейхенауна урăхла майпа пĕтерме шутласа хунă пулнă.

Стокгольмри пысăк вырăнти ĕçлĕ çынсем Рейхенау генерал вилĕмĕ — Гиммлер агенчĕсен ĕçĕ пулса тăни пирки нимĕн чухлĕ те иккĕленмеççĕ. «Рейхенау чĕре тытамакĕ тытнипе чирлесе вилнĕ» тени — Гиммлер агенчĕсем васкавлăн шутласа кăларнă пĕлтерӳ. Германи армийĕнче Рейхенау питĕ тĕреклĕ те çирĕп сывлăхлă çын пулнине пурте пĕлсе тăнă пирки, çав пĕлтерӳ кулăшла япала кăна пулса тăрать. Рейхенау нимĕçсен чи паллă спортсменĕсенчен пĕри пулнă, пĕтĕм тĕнчери спортивнăй состязани организаторĕсенчен пĕри шутланнă. «Рейхенау генерала пытарнă çĕрте Герингпа Рундштедт Гитлер вырăнне пулаççĕ», тесе ятарласах пĕлтерни гитлеровецсем «Рейхенауна юриех вĕлерни çинчен» çӳрекен хыпарсене чаплă пытару церемонийĕпе сирсе яма хăтланни пулать тесе шутлаççĕ, мĕншĕн тесен çӳлте асăннă хыпарсем Германи армийĕпе нимĕç халăхĕ хушшинче сарăлнăçемĕн сарăлсах пыраççĕ. Вăл хыпарсемсĕр пуçнех те гитлеровецсем Хĕвелтухăç фронтĕнче поражени тӳснĕ пирки Гитлер командованийĕ положение çăлса хăварассине Германи халăхĕ сахал ĕненекен пулнă.

Генерал Рейхенау Гитлера юрас тесе, вăхăтлăха тытса илнĕ совет территорийĕ çинче гитлерла чи тискер майсемпе çаратса, аркатса, халăха массăллăн вĕлерсе пĕтерни те унăн шăпине çăлаймарĕ. Рейхенау ĕлĕкрех Германин националистла партинче тăнă. Анчах вăл «кадровăй гитлеровец» пулман. Çапах та вăл хăйĕн тискерлĕхĕсемпе Германи çарĕн ытти командующийĕсенчен пуринчен те мала тухма тăрăшнă. Çавăншăн ăна Гитлер 1940 çулта октябрь уйăхĕнче уйрăм çыру çырса мухтанă.

Çапла пулин те, Рейхенау шăпине нимĕçсен 6-мĕш армийĕ октябрьпе декабрь хушшинче поражени тӳссе каялла чакни татса панă.

Кунта çакна асăрхаттараççĕ: генерал Рейхенау Германин чи пысăк çар çыннисенчен пĕри шутланнă. Вăл гитлерла çарăн мĕнпур агрессивнăй кампанийĕсенче те, ку шутрах гитлеровецсем Францие çĕмĕрсе кĕнĕ чух та, паллă руководитель пулса активлăн хутшăнса ĕçленĕ.

1938 çулта, ун чухнехи çар министрне Бломберга вырăнтан кăларсан, Рейхенау Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕн руководительне суйламалли кандидат пулнă. Фрича генерала вырăнтан кăларсă хыççăн та Германи çарĕн главнокомандующийĕ пулма Рейхенау кандидатурине тăратнă пулнă.

Халăх Комиссарĕ Летков юлташ вилни çинчен пĕлтерни

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ СССР Электростанцисен Халăх Комиссарĕ Андрей Иванович Летков юлташ 1942 çулти январĕн 16-мĕшĕнче Челябинск облаçĕнчи Большой Куяш ялĕнче вилни çинчен пĕлтереççĕ, унăн çемьине хăйсем хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

ЦК ВКП(б), СНК СССР.

Ливи фронтĕнчи ĕçсем

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи сывлăшри вăйĕсен командованийĕ хăйĕн юлашки коммюникинче çапла пĕлтерет: январĕн 14-мĕшĕнче Англи авиацийĕпе ирĕклĕ Францин самолечĕсем тăшман войскисен Хальфая районĕнчи позицийĕсене атакăланă. Бомбăсем противникăн пулемет йăвисемпе çар склачĕсем çине тĕл ӳкнине палăртнă. Çав вăхăтрах Англин истребителĕсем Эль-Агейла районĕнче тăшманăн мототранспорчĕ çине пулеметсенчен пенĕ. Англи истребителĕсем каллех хăйсен пысăк активлăхне кăтартнă. Сывлăшра пулса иртнĕ çапăçура противникăн пĕр «Мессершмитт-109» йышши самолетне тата итальянецсен тепĕр истребительне персе антарнă тата темиçе истребителе сиен кӳнĕ.

Январĕн 14-мĕшĕнче çĕрле, Англи бомбардировщикĕсем противникăн Эль-Агейлăран хĕвеланăç енче пыракан мототранспорчĕн колоннине атакăланă, мототранспортра взрывсем тата пушарсем пулнă. Самолетсен тепĕр ушкăнĕ Триполири çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Триполи гаванĕнче тата чугунçул станцийĕнче пушарсем тухнă. Январĕн 14-мĕшĕнчех Англи самолечĕсем противникăн Вăтаçĕр тинĕсĕн центрти пайĕнче пĕр эсминецпа пĕрле пыракан транспортнăй пароходне атакăланă. Самолетсем çинчен аялтанах пенĕ хыççăн пароходран çăра тĕтĕм мăкăрланма пуçланă.

Январĕн 14-мĕшĕнче çĕрле противникăн самолечĕсем Мальта çине пырса тапăннă. Бомбăсем ӳкнипе мирлĕ граждăнсен пурлăхне пăртак сиен кӳнĕ. Çапăçура тăшманăн «Юнкерс-88» йышши самолетне сиенленĕ, çакăн хыççăн вăл васкасах тарса пытаннă. Пĕтĕм операцисем хыççăн англичансен 9 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман, вĕсен экипажĕсенчен 4 пилот çăлăнса юлнă пулмалла тесе шутлаççĕ.

Англи çарĕсем Хальфайăна йышăннă

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи вăйĕсен командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: январĕн 16-мĕшĕнче ирхине де-Голль çарĕсен патрулĕсем Хальфайя районĕнче активлă операцисем туса ирттернĕ. Ĕнер ирхине Хальфайя гарнизонĕ пĕтĕмĕшпех парăнчă. Итальянецсемпе нимĕçсен салтакĕсене 5.500 çынна тыткăна илнĕ. Англичансен салтакĕсене 76 çынна тыткăнран хăтарнă тата противникăн юсавлă орудийĕсемпе çар снаряженине тытса илнĕ.

Англи авиацийĕ Гамбургпа Эмден çине тапăнни

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин авиаци министерствин коммюникинче çапла каланă: январĕн 16-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ çĕнĕрен Гамбургпа Эмден çине тапăннă. Çак хуласен икĕ портĕнче те вăйлă пушарсем тухнă. Кунсăр пуçне çурçĕр-хĕвеланăç Германири ытти объектсем çине те бомбăсем пăрахнă тата Голландире нимĕçсем йышăнса тăракан аэродромсем çине те бомбăсем пăрахнă. Çак операцисенчен Англин 6 самолечĕ каялла таврăнман.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ВАШИНГТОН, январĕн 18-мĕш. (ТАСС). Тинĕс-Çар министерствин сводкинче çапла кăтартса панă: Америка флочĕн карапĕсем Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи шывсенче противникăн 5 суднине путарнă, вăл шутра грузсем турттаракан икĕ пысăк судно, икĕ пысăк транспорт тата пĕр вăтам транспорт пулнă. Америкăн подводнăй лодки Токио заливĕ патĕнче противникăн виçĕ суту-илӳ суднине путарнă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерствин коммюникинче пĕлтернĕ тăрăх, Лусон утравĕ çинче (Филиппин) японецсем Америка флочĕпе Филиппин войскисене хирĕç вăйлă наступлени тума тытăннă. Çав наступлениe сывлăшри пысăк вăйсем тата артиллери пулăшса пыраççĕ. Противникăн вăйĕсем американецсен вăйĕсенчен чылай йышлăрах. Америкăпа Филиппин войскисем вăйлăн хирĕç тăраççĕ, противник малалла каяссине чараççĕ.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Англин Рангунри командованийĕ кăларнă коммюникере çапла кăтартса панă: Бирмăн Кăнтăр Хĕвелтухăç пайĕнчи обстановка лайăхланса пырать. Январĕн 16-мĕшĕнче Англи войскисен позицийĕсем çине Япони самолечĕсем вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Анчах çапах та çухатусем çук.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере кăтартса панă тăрăх, Японин бомбардировщикĕсем январĕн 17-мĕшĕнче Меданри аэродрома (Суматра) атакăланă. Çавăнта 8 бомба пăрахнă. Ишĕлтерӳсемпе çухатусем çук.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, январĕн 18-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Япони авиацийĕ январĕн 17-мĕшĕнче Сингапур çине вĕçсе пырса тапăннă.

Америка çарĕн йышне ӳстерни

ВАШИНГТОН, январĕн 17-мĕш. (ТАСС). Çар министрĕ Стимсон çапла пĕлтернĕ: çак çулта Америкăн çар йышне 3 миллион та 500 пин çынна çити ӳстерес программăна пурнăçа кĕртме тытăннă ĕнтĕ. Çапла ӳстерни Америка çарĕн типсĕр çинчи вăйĕсен тата авиаци вăйĕсен хальхи вăхăтри личнăй составĕн шутне 2 хут ытла пысăклатать.

ЯПОНИПЕ КИТАЙ ХУШШИНЧИ ВĂРÇĂ

Хубэй провинцийĕнче çапăçусем Бейпин-Ханькоу чугунçулĕнчен Хĕвеланăç еннерех Суйсянь районĕнче пыраççĕ. Китай войскисем, хулана йышăнса илсе, хăйсен операцийĕсене малалла аталантараççĕ.

Хунань провинцийĕн Çурçĕр пайĕнче çапăçусем Синдзян юханшывĕн икĕ çыранĕ çинче те пулса пыраççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ОБЪЯВЛЕНИЕ

Чебоксарскому ликероводочному заводу

ТРЕБУЮТСЯ:

бондари, опытный тракторист, механик для двигателя внутреннего сгорания, столяр, рабочие и работницы.

Оплата сдельная.

С предложением обращаться: Чувашская улица, № 61, ликероводочный завод, к главному инженеру.

Управление кинофикации при СНК Чувашской АССР

производит набор курсантов на Казанские курсы механиков звукового кино.

На курсы принимаются лица обоего пола в возрасте не моложе 16 лет, с образованием не ниже 7 классов.

К ЗАЯВЛЕНИЮ СЛЕДУЕТ ПРИЛОЖИТЬ ДОКУМЕНТЫ:

1) свидетельство об образовании,
2) свидетельство о рождении,
3) свидетельство о здоровье,
4) справки о служебном стаже и с последнего места работы,
5) командировочное удостоверение от межрайонного отдела кинофикации.
6) две фотокарточки,
7) автобиографию,
8) паспорт и воинский билет предъявляются лично при явке на курсы.

Срок обучения на курсах 3—4 месяца, начало занятий 20 января с. г.

Лица, принятые на курсы, обеспечиваются стипендией и общежитием.

Все лица, поступающие на курсы, подвергаются приемным испытаниям в объеме семилетки: по математике, физике, русскому языку и Конституции СССР.

Заявления с документами направлять по адресу: гор. Чебоксары, ул. Ленина, дом № 21, Управлению Кинофикации при СНК Чувашской АССР. Для справок телефон № 3-95.

2-1 Управление Кинофикации при СНК Чувашской АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, редактор замести... — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 6—83, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «П... сулĕпе» журналăн — 6—85, издательство конторин—0—23.

НТ 340 Типография №1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.